Тăвай районĕн хаçачĕ

# ЯЛ ĔÇЧЕНĔ

1935 çулхи февралĕн 17-мĕшĕнче тухма пуçланă
2024 çул
Юпа (октябрь), 25
ЭРНЕКУН
41/10731/№
Хакĕ ирĕклĕ



**Юпа уйăхĕн 13-мĕшĕнче ял хуçалăх тата продукци тирпейлекен промышленноç ĕçченĕн кунне паллă тунă.**

Паян Тăвайри культура çуртĕнче отраслĕн хастар ĕçченĕсемпе ветеранĕсене професси уявĕ ячĕпе саламлатпăр тата чыслатпăр.

Округри агропромышленноç комплексĕн ĕçченĕсем ĕç ÿсĕмлĕхне пысăклатма, ял хуçалăх производствин тухăçлăхне тата продукци пахалăхне ÿстерме вăй-халне шеллемесĕр тăрăшаççĕ. Кăçал шăрăх çанталăк условийĕсене пăхмасăр çĕр ĕçченĕсен тăрăшулăхĕпе тĕш тырăпа пăрса йышши культурăсене кашни гектартан вăтамран 27 центнер пухса илнĕ. Выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхĕ умĕнхи çулхинчен пысăкланнă. Тĕрлĕ апат хатĕрлессипе çине тăрса ĕçленĕ. Округри ял хуçалăх предприятийĕсемпе хресчен-фермер хуçалăхĕсенче çулталăка ăнăçлă вĕçлеме тăрăшаççĕ.

Отрасль ĕçченĕсем, пирĕн хисеплĕ ветерансем! Сире хресчен ĕçне юратнăшăн, ĕçри çитĕнÿсемшĕн чĕререн тав тăватăп. Çирĕп сывлăх, ырлăх, телей, вăрăм ĕмĕр сунатăп.

**Тăвай муниципалитет округĕн пуçлăхĕ**
**Олег ЛОМОНОСОВ**

## Халăхпа чылай ĕç пурнăçлаççĕ

**Чăваш Республикинче пуçару программи ăнăçлă ĕçлет. Тăвай округĕнчи ялсенче пурăнакансем те вырăнти территорие лайăхлатса чылай ĕç пурнăçлаççĕ. Вĕсен шутĕнче – çулсене юсасси, пĕвесене тасатасси, çăлкуçсемпе общество вырăнĕсене тирпей-илем кĕртесси тата ыт.те.**

Çак кунсенче пуçарулла бюджет мелĕпе Чутей ялĕнче шыва кĕмелли купель туса пĕтернĕ. Ун территорине хăтлăлатнă, сывăхри çырмана çÿп-çапран тасатнă. Вăл чиркÿрен инçех те мар вырнаçнăскер ĕненекенсемшĕн таса вырăн пулса тăрĕ.

«Тĕн праçникĕсенче, уйрăмах Кăшарнинче ĕненекенсене купель патне анса шыва кĕме меллĕ пултăр тесе карлăклă тимĕр пусма туса хунă. Хăтлăх кĕртесси малалла парать: йĕри-тавра йывăçсем, чечексем лартăпăр»,–тесе пĕлтерчĕ Чутей территори уйрăмĕн ертÿçи Дмитрий Белов.



**Зинаида ИВАНОВА**

## Смотр-конкурсра çĕнтернĕ

**Тăвай муниципалитет округĕнчи хуçалăхсем хушшинче ял хуçалăх техникине лайăх упрама лартассишĕн пынă смотр-конкурс итогĕсене пĕтĕмлетнĕ.**

Пĕрремĕш вырăна Валентин Геннадьевич Грачев хресчен-фермер хуçалăхĕ çĕнсе илнĕ. «Акконд-агро фирма» АО иккĕмĕш, «Дружба» ЯХПК виççĕмĕш вырăнсене тивĕçнĕ.

Ял хуçалăх техникине тĕрĕс упрани çитес çулхи çурхи ĕçсене хатĕрленессине çăмăллатать, техникăн тухăçлă ĕçлес ĕмĕрне вăрăмлатать.

**Александр СЕМЕНОВ**

## Тухăçлă ĕçшĕн

**Киччĕ ялĕ, нумайăшĕ пĕлет ĕнтĕ, лапамра, Кĕтне юханшывĕ хĕррипче вырнаçнă. Çавăнпа кунта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме, утă, ытти апат хатĕрлеме майсем пысăк. «Кубнинский» агрофирма» ООО вăй илет халĕ ку тăрăхра.**

Хуçалăх ферминче 100 ĕне усраççĕ. Пĕтĕм выльăх йышĕ вара виçĕ-тăватă хут пысăкрах. Çак никĕс çинче хуçалăх малалла аталанать. Кăçалхи тăхăр уйăхра, сăмахран, 465 тонна сĕт туса илнĕ. Ку кăтарту умĕнхи çулхинчен пысăкрах. Ĕнесен продуктивлăхне ÿстерсе пынă май, пĕтĕмĕшле продукци туса илесси те малалла хушăнĕ. Çак тĕллевпе вĕсене паян кун та шыв хĕррипчи çаранă кăлараççĕ, унсăр пуçне аларан та апат параççĕ. Апат тенĕрен, ăна çулталăк çурăлăх та янтăласа хунă. Утă-улăм, сенаж, силос, фуражлăх тырă – пурте пур. Люцернăна утăлăх икĕ хутчен çулса пухнă. Çаран курăкне те çулса типтерленĕ. Утта пĕтĕмпех Александр Афонин преслană, хăех рулонсене ферма çывăхне турттарса купаланă. Халĕ утта выльăхсем патне те хăех кĕртсе парать. Яланхиллех ирех тăрать вăл, ĕçре кун кунлать. Ыттисем те, фермăра ĕçлекенсем, выльăхсемшĕн тăрăшаççĕ, сĕт продукцийĕ хушăнса пытăр тесе тимлеççĕ.

Кукуруза уйне вара, вăл 107 гектар çинче пулнă, дискаторпа кăпкалатса хатĕрлеме тытăннă. Ку ĕçе Т-150 тракторпа Николай Моисеев механизатор пурнăçлать.

**Василий ВОЛКОВ, Киччĕ ялĕ**

### РЕСПУБЛИКА КУНĔ

## Малашне те хавхалантартăр

**2025 çулта Республика кунне халалласа ирттерекен тĕп мероприятисем Шупашкар хулинче тата Етĕрне округĕнче пуласси пĕлетпĕр ĕнтĕ. Çавăн пекех муниципаллă ытти округсенче те Республика кунне халалласа акатуйсем, ытти уяв, спорт мероприятийĕсем иртĕç.**

Кăçал Республика кунне Шупашкарпа пĕрлех Тăвайра та уявлани ăна нумай çĕнелсе лайăхланма, хăтлăх кÿме пулăшрĕ. Куçа тÿррĕн курăнмаллах çĕнелчĕ Тăвай. Çакна республика пĕлтерĕшлĕ уява килнĕ хăнасем те палăртаççĕ. Çакăн ырă таппи малашне те хавхалану, вăй-хăват парса тăтăр тăвайсене. Етĕрнесене те Республика кунне тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илме ырă сунатпăр.

**Иван ИВАНОВ**

## САЛАМЛАТПĂР!

**Владислав Анатольевич Чумышева** «Чăваш Республикин промышленноçăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят панă.

Вăл Тăвайри вăтам шкултан 1995 çулта вĕренсе тухнă, Шупашкарти сăра вĕретекен «Букет Чувашии» акционерлă обществăра оборудовани наладчикĕнче тăрăшать.



### РЕСПУБЛИКĂРА, ОКРУГРА

• Чăваш Енре кăçалхи 9 уйăхра 86 миллиард тенкĕ налук пухнă. Çакă вăл иртнĕ çулхи январь – сентябрь уйăхĕсенчипе танлаштарсан 22,1 процент пысăкрах. Ку виçере хушма хакран илекен налук тÿпи уйрăмах курăмлă – 38 процента яхăн. Уйрăм çынсен тупăшĕнчен тата усламран пырса кĕни те сумлă – 23 тата 21 процента яхăн.

• ЧР Ял хуçалăх министерстви хăй тĕллĕн ĕçлекенсене пулăшмашкăн 11 миллион тенкĕ уйăрĕ. Субсидие тивĕçес тесен конкурс витĕр тухмалла. Кăçал ял хуçалăхне аталантарма Чăваш Ен бюджетĕнче 3,2 миллиард тенкĕ палăртса хунă, çак укçан 65 процентне панă та ĕнтĕ. Тĕллев – ытти субсидие те производствăна ÿстерме хавхалантармашкăн аграрисем патне вăхăтра çитересси.

• Украина çарĕсем сутăнчăклăн тапăннине тата пурнăçа арканма хăтланнине пула Курск тата Белгород облаçĕсенчен Чăваш Ене 41 çын куçса килнĕ, çак шутра Курск облаçĕнчен – 36-н, 16-шĕ ача, Белгород облаçĕнчен 5-н, вĕсенчен пĕри ача.

• Чăваш Енре республикăри чи лайăх халăх дружинникне палăртса чысламалли конкурс иртнĕ. Унта муниципалитет тата хула округĕсенче чи лайăххисен шутне тивĕçнĕ дружинниксем хутшăннă, 16-ран виççĕшĕ – хĕрарăмсем. Хальхинче «Чи лайăх халăх дружинникĕ» ята Çĕнĕ Шупашкарти Данил Аверин тивĕçлĕ пулнă. Çĕмĕрле хулинчи тата Красноармейски округĕнчи Алина Абашинапа Владимир Андреев конкурсра иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене йышăннă. Пирĕн Владимир Федоров тăваттăмĕш пулнă.

• Вăрмарти Г.Е.Егоров ячĕллĕ вăтам шкулăн «Вăрман робинзонĕсем» команди Челябинск хулинче иртнĕ Пĕтĕм тĕнчери ачапăча экологи форумĕнче «Шыв объекчĕсене тасатас енĕпе хатĕрленĕ чи лайăх проект» номинацире призер пулса тăнă, 50 пин тенкĕлĕх сертификата тивĕçнĕ. Ачасем Вăта тата Энĕш юхан шывĕсене тасатма палăртнă.

• РСФСР тава тивĕçлĕ юристĕ, СССР çар прокуратуринче тăрăшнă Алексей Александров полковник (1939-2021, Тăвай районĕ, Ураскасси) çуралнăранпа октябрĕн 25-мĕшĕнче 85 çул çитрĕ.

• Кăçал Тăвай округĕнче 14 пушар тухнă, çакă, телее, иртнĕ çулхинчен сахалрах. Тăвайри пушар чаçĕнче ĕçлекенсем, пушар хăрушсăрлăхĕшĕн тăрăшса, райцентрта тата ялсенче пулса вуткăвартан сыхланмалли майсем çинчен каласа ăнлантараççĕ.

• Республика Правительстви Украинăри ятарлă çар операцийĕнче пуç хунисен ячĕпе тумалли Асăну мемориалĕн концепцине хатĕрлеме тата Шупашкарти «Çĕнтерÿ» асăну паркне çĕнетме резерв фондĕнчен 3,5 миллион тенкĕ уйăрнă.

**Иван ГЛАДКОВ**

НАЦИОНАЛЬНЫЕ ПРОЕКТЫ РОССИИ ОБРАЗОВАНИЕ

# Кашни ачан çитĕнĕвĕ савăнтарать

**Тăвай тăрăхĕнчи вĕренӳ учрежденийĕсенче ачасене тĕрлĕ енлĕ аталанма майсем çителĕклĕ.**

**«Вĕренӳ» наци проекчĕн витĕмĕпе юлашки çулсенче музейсемпе театрсем, медиацентрсем йĕркеленчĕç, вĕсен çумĕнче тĕрлĕ кружоксем ĕçлеççĕ. Ачасем вĕсене интересĕсене кура çӳреççĕ, пултарулăх ĕçĕнче çитĕнӳсем тăваççĕ.**

Çак кунсенче республика шайĕнче иртнĕ «Ялта чи лайăххисем» конкурс çĕнтерӳçисем хушшинче тăвайсем те пулни чăннипех савăнтарчĕ. Конкурс кăçал 3-мĕш хут иртрĕ. Маларахри çулсенче эпир юрă-ташăра маттур пулнăччĕ.

Хальхинче ял пурнăçне сăнлакан ӳкерчĕксем, интереслĕ хайлавсем, юрă-ташă, сăвă – пурĕ 13 ĕç тăратнă. Вĕсенчен 6-шĕ çĕнтерӳçĕсен шутне кĕме пултарчĕ.

В.Петров хитре ӳкерчĕкпе палăрчĕ (Элпуç шкулĕ çумĕнчи ача сачĕ, ертӳçи – Л.О.Михайлова), К.Ефимова (Енĕш Нăрваш шкулĕ), Е.Петров (Тăрмăш), А.Тиникова (Тăвай) вуланă сăвăсене çитекен пулмарĕ. Н.Немова (Мучар), М.Васильева (Çĕнĕ Пуянкасси) хайлавĕсем чи интереслисем пулчĕç.





Пухăннисене Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев, вĕрентӳ министрĕ Дмитрий Захаров, ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов тата ыттисем саламларĕç, хаклă парнесемпе чысларĕç.

**Алена ИВАНОВА**

# Профессипе туслашма

**Тăвай округĕнчи шкулсенче аслă классенче вĕренекенсем татăшах республикăри ВУЗсемпе профтехучилищĕсенче пулаççĕ.**

Çакă «Вĕренӳ» наци проекчĕн «Кашнине валли çĕнĕ майсем» федераци проекчĕпе тата профориентаци ĕçĕпе килĕшӳллĕн пулса пырать.Çапла, тĕслĕхрен, октябрĕн 19-мĕшĕнче «Университет шăматкунĕнче» вĕренӳ проекчĕпе килĕшӳллĕн Çĕнĕ Пуянкасси шкулĕнче вĕренекенсем И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче тата Мускав политехника университетĕнче пулнă. Унта вĕренекен студентсем, преподавательсем йĕркелесе ирттернĕ ăсталăх класĕсем, лекцисем пулас професси майĕсене тарăнраххăн ăнланса илме пулăшнă.

Мучар шкулĕнче 10-мĕш класра вĕренекенсем Канашри строительство техникумне çитсе унта кадрсем вĕрентсе хатĕрленипе кăсăкланнă, вĕренӳ мастерскойĕнче, библиотекăра, спортзалта тата столовăйра пулнă, плиточникпе каменщик профессийĕсемпе паллашнă, нумай çĕнни пĕлнĕ.

Элпуçĕнчи тата Тăрмăшри 9-мĕш классенче вĕренекенсем Шупашкарти строительствăпа хула хуçалăхĕн техникумĕнчи мастерскойсенче пулса тĕрлĕ професси ăсталăхĕн майĕсене ăша хывнă.

**Ксения ВАСИЛЬЕВА**

«ДЕМОГРАФИ» НАЦИ ПРОЕКЧĔ

# Волонтер ĕçĕ пархатарлă

**Сăпайлăхĕпе, ăшă кăмăлĕпе хăй патне туртать çак хĕрарăм. Ватăрах кинемейсене карас телефонĕ çине палламан номерсем шăнкăравлани канăçсăрлантарать. Пĕччен пурăнаканшăн чун-чĕре тунсăхĕшĕн калаçса йăпанни темле эмелрен те сиплĕрех. Çапла аслă ăру çыннисене тимлĕн итлесе кăмăлне уçма, йывăрлăхри ыйтăвĕсене татса пама тăрăшать Çĕнçырмари ветерансен совечĕн председателĕ Фаина Степанова.**




Эрнере икĕ кун, ытларикунпа эрнекун, Тăвайри халăха социаллă пулăшу паракан центраваскать вăл. «Активлă ĕмĕр» клуба çӳрекенсем Тăван çĕршыва хӳтĕлекен ентешсене пулăшса маскировка тетелĕсем çыхаççĕ, окоп çуртисем тăваççĕ, сиплĕ чей курăкĕсем хатĕрлеççĕ. Çар çыннисенчен темиçе хутчен те Тав сăмахĕсем килнĕ Тăвайри кĕмĕл волонтерсен ячĕпе. Çакăнта Фаина Григорьевнан та тӳпи пурах ĕнтĕ. Хăйне ял хĕрĕ Галина Маковей çак пархатарлă ĕçре ветерансем тăрăшнине пĕлтерсен, пĕр шухăшласа тăмасăрах килĕшни çинчен каласа панăччĕ вăл.

«Çынна пулăшни, ырă ĕç туни, ман шутпа, пурнăçра – чи пахи,– тет Ф.Г.Степанова. – Кунта вара пĕр-пĕрне пулăшма, йывăрлăхра хавхалану кӳме тăрăшасси аслă ӳсĕмрисене пĕр ушкăна, тĕрĕсрех, туслă çемьене, чăмăртанине туйса илетĕн. Пĕрле пуçтарăнса шăкăл-шăкăл калаçса ĕçлесен вăхăт ирттнине те сисместĕн çав».

Кăçалхи юпа уйăхĕн пуçламăшĕнче Чăваш Ен тĕп хулинче пенсионерсем хушшинче финанс пĕлӳлĕхĕпе Пĕтĕм Раççей чемпионачĕн регион тапхăрĕ иртнĕ. Пĕр шухăшлăн кăçал та фестивале Фаина Степанована яма йышăннă. Иртнĕ çулхи пекех округ чысне хастаррăн хӳтĕленĕ вăл. Сертификатне те, парнине те илсе килнĕ.

– Халĕ ултавçăсем дистанци мелĕпе мĕн чухлĕ çынна шар кăтартаççĕ. Нимсĕр тăратса хăвараççĕ. Укçа-тенкĕне тытма, ултавçăсен серепине çакланасран сыхланма тест ыйтăвĕсем йĕркелерĕç. Çак темăсемпе çыхăннă сăмах каçмăша та тупма кăсăклă пулчĕ,– каласа кăтартнă вăл пĕлтерĕшлĕ ĕç-пуç çинчен кĕмĕл волонтерсене.

Хăйĕн кун-çулне финанс профессийĕпе çыхăнтарнă Фаина Григорьевна. «Алдиаровский» совхозра виçĕ çул бухгалтерта, 15 çул экономистра тăрăшнă, ун хыççăн самана таппи Росгосстрахăн Тăвайри уйрăмне илсе çитернĕ. Кунта хăйĕн юратнă ĕçне 19 çул тăснă. Ялти маттур яшпа Геннадий Ильичпа кун-çулне пĕрлештернĕ. Икĕ хĕр пăхса ӳстернĕ. Ялта килçурт çавăрнă. Шел те, мăшăрĕпе пĕр хĕрĕ ытла та ир пурнăçран уйрăлнă. Халĕ хуçалăхĕнче чăх-чĕп пур, тĕрлĕ çимĕç ӳстерет пахчара. Тăвайра пурăнакан хĕрĕ район тулашĕнче ĕçленĕ май, 4 класри Артем мăнукне ура çине тăратма пулăшать: шкула ăсатса кĕтсе илет, уроксене те пĕрле хатĕрленеççĕ. Ялти хуçалăхри ĕçсене тирпейлесен вăхăтне ытларах Тăвайĕнче ирттерет çапла кукамай. Ыр кăмăллăхçăсен ĕçне те ытларах хутшăнма май пур капла.

«Аслă ăру» федераци проекчĕпе «Пархатарлă вăрăм ĕмĕр» проекта пурнăçласа çар операцийĕнчи салтаксене пулăшнисĕр пуçне ытти ырă ĕçе хутшăнаççĕ сумлă ĕç ветеранĕсем. Музейсенчи, культура çуртсенчи, ытти мероприятисенче пултарулăхпа савăнтараççĕ. Акцисен вăхăтĕнче ыттисене те явăçтараççĕ. Хăйсем те тĕрлĕ тытăмри çынсемпе тĕл пулаççĕ, вĕренеççĕ, тавракурăма анлăлатаççĕ.

Социаллă пулăшу центрĕ, общество организацийĕсем тăрăшнипе кĕмĕл ӳсĕмри волонтерсем валли экскурсисем йĕркелесе Шупашкарти, Йошкар-Олари, Сĕнтĕрвăрринчи, Пăлхарти тата ытти хулари паллă вырăнсене çитсе курнипе кăмăллă юлнă. Муркашри страус ĕрчетекен фермăна, Ильинкăри Раççейри вată юман ӳсекен вырăна, Сăр тата Хусан хӳтĕлев сооруженийĕсем тума хутшăннă ĕç паттăрĕсене асăнса лартнă мемориал-комплекса кайса курни те тарăн йĕр хăварнă ветерансен асĕнче. Çак уйăхра Шупашкара «Кĕмĕл чун» форума саккăрăн кайса килнĕ. Тăвайри ЦСОН ĕçне лайăххисен йышĕнче асăнни савăнтарнă вĕсене.

«Активлă ĕмĕр» центрта хамăра çамрăк туятпăр»,– тенине тăтăшах илтетĕн ыр кăмăллăх ĕçченĕсенчен. Кашнин пултарулăхри çитĕнĕвне курма тăрăшаççĕ кунта. Тухсах çӳрейменнисене юбилейсемпе килĕсене кайса саламлаççĕ, спортра, пултарулăх конкурсĕсенче палăракансене хавхалантарсах тăраççĕ. Хăйсен ырă тĕллевĕсене пурнăçа кĕртме тĕрлĕ проект хатĕрлеççĕ Наталия Федорова социаллă ĕçченпе Марина Афанасьева директор ертсе пынипе.

Римма Гурина, Валентина Александрова, Галина Маковей, Светлана Чернова, Бориспа Тамара Александровсем, Римма Маркова, Ольга Васильева, Фаина Тимофеева, Полина Иванова, Раиса Иванова, Зинаида Иванова, Надежда Данилова, Людмила Григорьева, Екатерина Федотова, Мария Кузьмина, Елизавета Ильина, Нина Иванова, Вера Ермолаева, Людмила Егорова – хастар волонтерсем. Çак списока малалла та тăсма пулать. Вĕсен йышĕ округра ӳссех пырать.

**Раиса ШУМОВА**

ЭПИР ПĔРЛЕ!

# Хӳтĕлевçĕсем валли – маскировка тетелĕсем

**Пĕтĕм çĕршывĕпех çынсем пĕрлешсе ятарлă çар операцине хутшăнакансене пулăшу пама тăрăшаççĕ. Чутей ялĕнчи волонтерсем те кашни кунах маскировка тетелĕсем çыхаççĕ. Килти ĕçсене пăхмасăрах хĕрарăмсем культура çуртне васкаççĕ. Хамăр ентешсене пулăшас тесе çак пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçе хутшăннине ырламалла. Вĕсен аллисем çĕнтерӳ çыххисене хăвăрт та меллĕн çыхаççĕ. Хальхи вăхăтра 84 тетел явнă. Маларах пĕр тетеле 4–5 сехет хушшинче çыхнă пулсан, халĕ вара 3 сехетрех пĕтереççĕ.**

«Тетелсен виçи тĕрлĕрен: 3х3 пуçласа 3х16 м калăпăш таран. Ытларах чухне сарлакăшĕ 3, тăршшĕ 6 метрлă сеткăсем çыхма тивет. Явнă тетелсен пĕтĕмĕшле лаптăкĕ пин ытла тăваткал метрпа танлашать. Лентăсене алăпа касатпăр. Тĕрлĕ тĕслĕ пир-аврăпа усă куратпăр. Пирĕн кĕмĕл волонтерсен хӳтĕлев хатĕрĕсем малти линири ентешсен аллине лекнипе татах та кăмăллă. Пархатарлă ĕçе хутшăнакан хĕрарăмсене пурне те тав сăмахĕ калас килет»,– тесе пĕлтерчĕ çак ĕçе йĕркелесе пыракан Чутей ял хастарĕ Елизавета Шамбулина. Вăл вуннăмĕш класс ачисене тетел çыхас енĕпе мастер-класс ирттернĕ, çыхас ĕç вăрттăнлăхĕсене кăтартнă çамрăк волонтерсене.

Тыл ĕçченĕсем (вĕсене çапла чĕнес килет) çыхă хыççăн çыхă явса çĕнтерĕве çывхартаççĕ. Вĕсем çак ĕçе чĕре ăшшине параççĕ.

«Ывăлсем, мăшăрсем, аттесем килĕсене чĕрĕ те сывă таврăнччăр. Пирĕн пуç çийĕн ялан мирлĕ тӳпе пултăр!»– теççĕ пĕр кăмăллăн.



**Зинаида ИВАНОВА, Чутей ялĕ**

АПК ВЕТЕРАНĔСЕМ: КУЛЛЕНХИ ĔÇСЕМ

# Пĕрле пулни вăй-хал парать

**Тăвай округĕнче те, ытти çĕрти пекех, республикăри агропромышленноç комплексĕн ветеранĕсен Союзĕн уйрăмĕ ĕçлет. Унăн йышĕнче паянхи кун 22 çын. Тĕпрен илсен, АПКра вăрах вăхăт вăй хунă, ял хуçалăх аталанăвне курăмлă тӳпе хывнă ветерансем. Вунă çул хушши организацие хисеплĕ те пултаруллă ертӳçĕ, Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Михаил Яковлевич Яковлев ертсе пычĕ. Вăл тăрăшнипе пирĕн тăрăхра ял хуçалăхĕн чи хисеплĕ ĕçченĕсем пурăннă çуртсем çинче халĕ асăну хăмисем пур, вĕсен шучĕ çирĕмрен те иртнĕ. Сăваплă ĕç ку, паллах. Хамăрăн пултаруллă ентешсен пархатарлă ĕçĕсене асра тытни тем пекех паха.**



2022 çултанпа ветерансен районти уйрăмне Н.И.Иванов ертсе пырать. Вăл та ĕçтешĕсемпе яланах тĕл пулать, кулленхи пурнăç ыйтăвĕсене татса пама пĕрле пухăнса каласассине ырă йăлана кĕртнĕ.

Черетлĕ тĕлпулăва ял хуçалăх тата ĕçлесе тирпейлекен промышленноç ĕçченĕсен уявне халалларĕç. Çавра сĕтел хушшинче пухăннă аслă ăру çыннисене уйрăм ертӳçи Николай Иванов ăшшăн саламларĕ, çирĕп сывлăх сунчĕ.

– Пурнăçран юлар мар, хастарлăхпа, пуян опытпа çамрăксене ырă тĕслĕх кăтартар,– терĕ вăл. Николай Ильич нумаях пулмасть Шупашкар округĕнчи ку чухнехи пысăк технологиллĕ «Чебомилк» ОООра пулса курни çинчен каласа кăтартрĕ. Кунта АПК ветеранĕсен Чăваш Енри Союзĕн вырăна тухса ирттернĕ ларăвĕ пулнă май, районти уйрăмсен ертӳçисем энергоэффективлă сĕт-çу фермин ĕçĕ-хĕлĕпе паллашнă. Çак кунсенче Н.И.Иванов Тушкилти вăтам шкулта агрокласра тата аслă классенче вĕренекенсемпе тĕл пулнă, ял хуçалăх ĕçченĕн ĕçĕ сăваплă та хальхи вăхăтра сум пулни çинчен чарăнса тăнă. Çамрăк специалистсене ял хуçалăх предприятийĕсенче те, фермер хуçалăхĕсенче те кĕтеççĕ. Вĕренӳре пухнă пĕлĕве, ĕмĕт-тĕллеве пурнăçа кĕртме майсем уçăлаççĕ яш-кĕрĕмшĕн.

Хисеплĕ ĕçтешĕн, çулĕсемпе чи аслă юлташĕн – М.Я.Яковлевăн сăмахĕсене те тимлĕн итлерĕç çавра сĕтел хушшине пухăннисем. Çăкăр çитĕнтерекен, юрварлăх выльăх-чĕрлĕх ӳстерекен çынсен профессийĕ чи хисепли, пĕлтерĕшли пирки чарăнса тăчĕ Михаил Яковлевич, тĕлпулăва пухăннă çынсем çак пархатарлă ĕçре сывлăхне те, вăхăтне те шеллемесĕр тăрăшни çинчен кăмăлтан аса илсе тав турĕ. Производствăра кăна мар, ялсен социаллă пурнăç аталанăвĕнче те вĕсен тӳпи пысăк ĕнтĕ.

Çавра сĕтел хушшинче ĕçтешсем пĕрпĕрин пурнăçĕпе интересленчĕç, пĕрле ĕçленĕ вăхăта аса илчĕç, техĕмлĕ чейпе хăналанчĕç.



Тăвайри культура çуртĕн пултаруллă артисчĕсем В.Степанов, А.Алексеева, И.Краснова, И.Ефимова аслă ăру çыннисене илемлĕ юрă-кĕвĕпе савăнтарчĕç. Вырăнти паллă купăсçă Игорь Кузьмин та хăйĕн пысăк ăсталăхĕпе килентерчĕ.

Вĕсемпе пĕрле ветерансем хăйсем те килĕштерекен кĕвĕсене аса илсе юрларĕç.

– Кун пек хамăра та çамрăкрах, вăй хушнăн туятпăр,– тесе сывпуллашрĕç пĕр-пĕринпе тĕлпулăва килнисем.

**Людмила ПАВЛОВА,**
**АПК ветеранĕсен**
**Канашĕн членĕ**

СПОРТ

# Республика чысне хӳтĕлеççĕ

**Ялти çуллахи спорт вăййисем юпа уйăхĕн 16–19-мĕшĕсенче Чулхула облаçĕнчи Пысăк Суходол ялĕнче иртнĕ. Чăваш Ен команди 450 пин çынран сахалрах халăх пурăнакан яллă вырăнсен субъекчĕсен ушкăнĕнче командăпа тупăшса пĕрремĕш вырăн йышăннă.**

Пĕтĕмĕшле кăтартупа республика регионсем хушшинче çиччĕмĕш. Пĕрлештернĕ команда йышĕнче Тăвай округĕнчи Сергейпа Екатерина Михайловсен çемйи пулнă. Спорт çемйисем тата ГТОн нумай енлĕ кĕрешĕвĕнче 17 команда хушшинче Михайловсем 6-мĕш вырăна тухнă.

Çавăн пекех нумай ăмăртура вĕсем республика чысне çӳллĕ шайра хӳтĕлеççĕ. Çулталăк каялла Мордва республикинчи «Спорт – яла!» фестивальте вĕсен команди кĕмĕл медале тивĕçнĕччĕ.

**Анатолий КИРИЛЛОВ,**
**«Аль» спорт шкулĕн директорĕ**



ЯЛ ХУÇАЛĂХĔ

# Ытларах пăрулаттарса илер

**Кăçалхи тăхăр уйăхра округри ял хуçалăх предприятийĕсемпе хресченфермер хуçалăхĕсем пурĕ пĕрле 2103 пăру пăхса илнĕ. Ку шута ĕнесенчен пăрулаттарса илнисем те, пĕтĕленсе юлнă пушмак пăрусенчен илнисем те кĕреççĕ. Ĕнесенчен пăрулаттарса илнисем 1670 пуç. Ĕнесен хисеплĕ вара хуçалăхсен фермисенче 2464 пуç. Чи пăшăрхантараканни – çамрăк выльăхсем пăхса илесси умĕнхи çулхи çак тапхăртинчен 268 пуç сахалраххи, çак шутра ĕнесенчен те 112 пăру катăкрах илнĕ. Чăн та, çулталăк вĕçленмен-ха. Кашни ĕне çулталăк тăршшĕнче пĕр пăруран кая мар парнелемелле. Анчах юлса пынине хăваласа çитме те çăмăл мар. Çавăнпа ĕнесемпе пушмак пăрусем кăршăн пулнине тимлесех тăмалла тата вăхăтра ерттерсе хăварма тăрăшмалла. Çакăнтан сĕт продукцийĕ те, çамрăк выльăхсем вăхăтра пăхса илесси те тӳрремĕнех килет.**

| Хуçалăхсем | Пăрусем пăхса илнĕ, пуçпа | | 2023 çулхинчен ытларах (+) е сахалрах (-) |
|---|---|---|---|
| | 2023 | 2024 | |
| «Кубнинский» а/ф | 87 | 52 | -35 |
| «Акконд-агро ф.» АО | 936 | 913 | -23 |
| «Дружба ЯХПК | 182 | 144 | -38 |
| «Новый путь» ЯХПК | 42 | 41 | -1 |
| «Чутеевский» ЯХПК | 146 | 112 | -34 |
| Д.Алексеев ХФХ | 35 | 23 | -12 |
| Ю.Борисов ХФХ | 11 | 11 | - |
| В.Грачев ХФХ | 290 | 270 | -20 |
| Ю.Гурьев ХФХ | 13 | 13 | - |
| С.Илларионов ХФХ | 366 | 321 | -45 |
| В.Козлов ХФХ | 29 | 20 | -9 |
| С.Муханов ХФХ | 55 | 50 | -5 |
| В.Никитин ХФХ | 13 | - | -13 |
| Вл.Николаев ХФХ | 85 | 56 | -29 |
| В.Николаев ИП | 19 | - | -19 |
| А.Федоров ХФХ | 11 | 17 | +6 |
| О. Григорьева ИП | 27 | 51 | +24 |
| Н.Алексеев ХФХ | 3 | 9 | +6 |
| Р.Васильев ХФХ | 21 | - | -21 |
| **Пĕтĕмпе:** | **2371** | **2103** | **-268** |

**Иван ГЛАДКОВ**

# Кĕр илемĕ ачасене савăнтарать

**Ача садĕнчи кĕр уявĕ шăпăрлансене яланах асамлă тĕнчене çитерет. Çап-çутă сăрăсем, тĕрлĕ тĕслĕ çулçăсен парачĕ, çумăр пĕрĕхсе пит-куçа ачашлани... Тăвайри 2-мĕш ача садĕнчи «Солнышко» кĕçĕн ушкăнра праçнике çак тĕлĕнмелле вăхăта халалланă. «Кĕркуннепе» «Кăмпа» хăнасем те пĕтĕм кăмăл-туйăма уçса ячĕç.**

Юрăсем юрларĕç, ташларĕç, хаваслă вăйăсемпе киленчĕç. Çавăн пекех кĕрхи çумăр айĕнче уçăлса çӳрерĕç, сăвăсем каларĕç. Кĕрхи çулçăсемпе пĕчĕккисем ташăра çаврăнчĕç. Мĕн чухлĕ интересли, асра юлмалли пулчĕ! Юлашкинчен «Кăмпа» пурне те тутлă кучченеç-кăмпасемпе сăйларĕ. Çакăн пек уявсем ачасене сут çанталăк илемне курма çĕнĕ майсем уçаççĕ, ăна упрама хăнăхтараççĕ.



**Марина БУИНЦЕВА,**
**ача садĕн воспитателĕ**

ĔÇЛЕВ

# Ĕçпе тивĕçтерме тăрăшса

**Кăçалхи январь-сентябрь уйăхĕсенче Тăвайри ĕçлев центрĕ урлă 7 инвалида ĕçпе тивĕçтерме май килнĕ.**

Вĕсенчен пĕри магазинта яланлăх ĕç вырăнĕ тупнă. Ыттисем выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен станцире, больницăра, ял территорийĕсенчи тирпей-илем кĕртес ĕçсенче тăрăшнă.

18 çын центр пулăшăвĕпе тĕрлĕ профессие алла илнĕ, ытларахăшĕ дистанци мелĕпе вĕреннĕ.

**Наталия ИВАНОВА,**
**Тăвайри ĕçлев центрĕ**

## МАНĂН ÇЕМЬЕ – МАНĂН ПУЯНЛĂХ

Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçланать

# Спортпа хавхаланса

**Тăвай ен хăйĕн паллă çыннисемпе чăннипех те мухтанать. Тĕнчипех искусствăра палăрнă артист-художниксем, çыравçăсем, скульпторсем çинчен нумайăшĕ пĕлет. Паянхи сăмахăм СССР спорт мастерĕ Петр Владимирович Данилов пирки. 72 çулта вăл. Спортăн тĕрлĕ тĕсĕ кăсăклă уншăн: çăмăл атлетика, йĕлтĕрпе чупасси, футбол, волейбол вăййисем... Халĕ вăрăм дистанцисене чупма кăмăллать. Кăçалхи август уйăхĕнче иртнĕ Шупашкарти çурма марафон ăмăртăвĕнче (21,1 километр) пирĕн ентеш 70–74 çулхисем хушшинче иккĕмĕш вырăн йышăннă. Çак пысăк çитĕнӳ хыççăнах «Элара» клубри юлташĕсем Хусан хулинчи ăмăртусене йыхравланă марафонеца. Хăйĕн ӳсĕм категорийĕнче виççĕмĕш пулни те пысăк çитĕнӳ мар-и-ха? Чи вăйлă спортсменсем старта тухнă-çке кунта та.**



5–6 çул ĕнтĕ вĕсем мăшăрĕпе хуларан яла куçса килсе хăйсем çавăрнă кил-çуртра пурăнаççĕ. Любовь Петровна Тушкил тăрăхĕнченех, Ямпулатра çуралса ӳснĕ. Шупашкар хулинче ЖКХ тытăмĕнче бухгалтерта ĕçлесе канăва тухнă. Халĕ пахчари, кил хуçалăхри ĕçсенчен киленӳ илме тăрăшаççĕ. Чăх-чĕп, качака тытаççĕ. Хулари мăнукĕсем каникула ялта ирттереççĕ. Вĕсем, 7 тата 8 классенче вĕренекенскерсем, шывра ишессипе палăрнă. Волейболла выляççĕ. Аслашĕ пекех чупаççĕ, çăмăл атлетика енĕпе пултарулăхне аталантараççĕ. Даниловсен Руслан ывăлĕ Мускавра электричество тытăмĕпе çыхăннă ĕçре тăрăшать.



– Ăмăртусене хутшăнасси хăçан пуçланнă?– интересленетĕп спортсмен-преподавательтен.

Шкулта вĕреннĕ чухнех Петр районта, республикăра спортăн тĕрлĕ ăмăртăвĕсенче палăрнă. 1966 çулта Тăвайĕнче 500 метрлă кросс-чупура малти вырăна тухса, пĕрремĕш награда çĕнсе илнĕ. 1969 çултан районăн пĕрлештернĕ волейбол командинче вылянă. Волейболистсенчен Василий Архиповпа Аркадий Захарова лайăх астăвать. «1977 çулта Тушкилти волейбол командипе Тăрмăшсене пĕрремĕш партире 15:0 шутпа парăнтарни нихăçан та манăçмĕ, вăйă вара тушкилсем çĕнтернипе вĕçленнĕччĕ»,– куç умне кăларчĕ 47 çул каяллахине П.В.Данилов.

Малалла вара хăйĕн ăсталăхне ытларах çăмăл атлетика енĕпе кăтартма пуçланă Тушкил каччи. Канашри педучилищĕре вĕреннĕ чухне 3000 метрлă дистанцире Раççей чемпионĕ пулса тăнă. Ял хуçалăх институчĕн студенчĕ 5 тата 10 километра чупса аслă шкулта вĕренекенсем хушшинче чи лайăх результатсем кăтартнă. 1980 çулта ял спортсменĕсем хушшинче ылтăн медаль çĕнсе илнĕ. Ун хыççăнах «Урожай» общество кросĕнче иккĕмĕш çитнĕ финиша. Пĕтĕм Раççейри Клушино ялĕ (Ю.А.Гагарин çуралнă) – Гагарин хули (24 км яхăн) маршрутлă çăмăл атлетсен чупăвĕнче умлă-хыçлă икĕ çул чи вăйли пулнă. В.В.Горбатко летчик-космонавт призĕшĕн пынă Пĕтĕм Раççейри кроса хутшăнса бронза медале тивĕçнĕ.

– 300 пин ытла çухрăма хыçа хăварнă вăл ăмăртусене хутшăнса, – сăмах хушрĕ мăшăрĕ Любовь Петровна. – Тĕнче пĕлтерĕшлĕ эстафета чупăвĕсенче те тупăшнă. Кашнинчех уншăн пăшăрханса хама та ăмăртусен участникĕ пекех туяттăм.

Мĕнпурĕ вара 50 ытла марафон чупăвĕнче (марафон дистанцийĕ – 42 км та 195 метр), 2 пин ытла тĕрлĕ ăмăртура хăйĕн ăсталăхне кăтартнă Совет Союзĕн спорт мастерĕ П.В.Данилов.

Наградăсем пирки сăмах пуçарсан: «Пĕр чăматан тулли. Хисеп хучĕсен шучĕ те çук. Хам вĕрентсе хатĕрленĕ ачасенчен спорт мастерĕсемпе кандидатсем тухнă. Çыхăнăва татмаççĕ, çыраççĕ, шăнкăравлаççĕ»,– тесе хуравларĕ Чăваш Енри паллă марафонец. Çакă мар-и-ха спорта аталантарма, ватти-вĕттишĕн спортран пурнăç йĕрки туса хурассишĕн вăйхалне, вăхăтне шеллемесĕр тăрăшнин хисепĕ.

Физкультурăпа спорт юхăмĕ Петр Владимирович Данилов пек хастарсем пуррипе аталанать. Вĕсене те пулăшмалла. Тивĕçлĕ кануri спорт ветеранĕ ăмăртусене халĕ хăй шутĕнчен кайса çӳрет. Паллах, нухрачĕ те сахал мар тухса каять. Унăн паянхи тĕллевĕ вара – çамрăксене спорта, уйрăмах çăмăл атлетикăна, вăрăм дистанцисене чупма ытларах явăçтарасси.

Паллах, тренировкăсемсĕр пысăк кăтартусем тăваймăн. Ирхине ирех ял çумĕнчи çул çине чупма тухать Петр Владимирович. «Куллен 10 çухрăм ытла та чупатăп. Утни-чупни сывлăхшăн лайăх. Вăй-хал пур-ха, вырăнта иртекен ăмăртусене те хутшăнасчĕ. Спорт пĕрлештерет, хавшаккисене вăйлатать. Çемье юнашар пулни вара – нимĕнпе виçейми пысăк телей,– терĕ вăл. – Çывăх çынсем юнашар пулни çĕнĕрен çĕнĕ çĕнтерӳсем тума хăват парать».

Çемйипе пĕрле те тупăшнă вĕсем. Хулан тĕп лапамĕнче «Атте, анне тата эпĕ – спортпа туслă çемье» ăмăртăва хутшăннине аса илчĕ калаçу вăхăтĕнче Любовь Петровна. Пъедесталăн виççĕмĕш картлашки çине хăпарнă. Мăшăрне ăмăртусенче яланах хавхалантарма тăрăшнă, тренировкăсене те пĕрле хутшăннă. Паянхи кунччен мăшăрĕн спортри «сывлăшĕпе» сывлать тесе калас килет арăмĕ çинчен. «Акă, октябрĕн 1–7-мĕшĕсенче, пĕр эрне хушшинче, пĕтĕмпе 69 километр чупнине палăртса çырнă хăйĕн блокнотĕнче»,– сăмахне тăсрĕ вăл. Пĕтĕм пурнăç йывăрлăхĕсене пĕрле пайлама вĕреннĕ-рен те çемйи çирĕп вĕсен. Мăшăрĕ ирхи тренировкăран киличчен чылайччен калаçрăмăр Любовь Петровнапа, спорт карьеринчи тепĕр самантпа паллаштарчĕ.

Петр Владимирович 1992 çулхи апрелĕн 11-мĕшĕнче Одесса хулинчи ăмăртура 100 километра парăнтарнине чăн-чăн çĕнтерӳ тесе шутлать. 7 сехет те 24 минут та 58 çеккунтра чупса тухнă çакăн пек вăрăм дистанцие. Тĕрлĕ çĕршыв атлечĕсемпе хутшăннă. «Хурçă пек çирĕп характерлă вăл пирĕн. Тĕллев лартсан, пурнăçлатех! Çакă ăна курăмлă çитĕнӳсем тума май парать пулĕ. Вăйĕ ан иксĕлтĕрччĕ малашне те. Ăмăртусене хутшăнса палăрасса шанатпăр»,–тесе хушса хучĕ. Çакăншăн куллен тăрăшать кил хуçи хĕрарăмĕ. Упăшки качака юр-варне юратнăран час-часах чăкăт янтăлать, сыр та тăвать хушăран. Ытлашшине сивĕтмĕшре упраççĕ. Сывлăхĕшĕн тимлесе тĕрĕс апатлану йĕркелеме хăнăхнă ĕнтĕ юратнă мăшăрĕ валли. Пахчари ĕçсене пĕрле тума хăнăхнă. Çулла мăнукĕсем пулăшаççĕ. Часах вĕсем кĕрхи каникула килмелле. 20 тата 6 метрлă икĕ теплица вырнаçнă кил паçминче. Вĕсенче ытларах помидорпа пылак пăрăçа вырăн параççĕ. «Пĕтĕм çимĕçе хамăр лартса туса илетпĕр»,– сăмах хушрĕ Петр Владимирович. Паян та хăй 14 çухрăм ытла чупнине хавхаланса пĕлтерчĕ.

Яш вăхăтсем те куç умне тухрĕç. Ял хуçалăх академийĕнче вĕреннĕ вăхтра хăмлаçăсен бригадинче практикăна иртерекен каччă Ямпулат хĕрне куç хывнă. Бухгалтер профессине илекен Люба Антонова çуллахи сесси хыççăн «Шимкусский» хуçалăха весовщицăна вырнаçнă пулнă. Юратса çемьеленнĕ. Петр Владимирович 7 ачаллă, Любовь Петровна 6 ачаллă пысăк çемьере çитĕннĕ. Хăй асламăшĕ енчен Совет Союзĕн Геройĕн Семен Коноваловăн тăванĕ пулнипе мăнаçланать Л.П.Данилова. Пирĕн паттăр ентеш çинчен ӳкернĕ «Несокрушимый» фильма Даниловсем çемйипе курма юратаççĕ.

Пирĕн проект кăçалхи Çемье çулталăкĕпе тата çемье институтне çирĕплетессипе çыхăннă май, калаçу вĕçĕнче çак тема патнех таврăнтăмăр. «Йывăç тымарĕпе, çын çемйипе çирĕп»,– тесе ахальтен каламан. Çапла пĕтĕмлетӳ турĕ Петр Владимирович. Çемьепе пулнине мĕн çиттĕр çав!

Тăвансем юнашар пулни йывăрлăхсене çĕнтерме пулăшать. Пĕччен хулă хуçăлать. Çак туслă мăшăр хăйсен пĕртăванĕсем, Николай Владимировичпа Николай Петрович çемйисем, юнашар пĕр-пĕрне пулăшса, туслă пурăннипе те питĕ кăмăллă пулнине палăртрĕç.

**Раиса ШУМОВА**

### КĔСКЕ СПРАВКА

*Петр Данилов 1952 çулта Тушкил ялĕнче çуралнă. Ялти тулли мар вăтам шкулта 8 класс пĕтернĕ. 1969 çулта кӳршĕллĕ Вăрмар районĕнчи Шăхалĕнчи вăтам шкулта вĕренсе алла аттестат илнĕ. Канашри педагогика училищинче (1969–1974), Чăваш ял хуçалăх институтĕнче (1981) вĕреннĕ. Тушкилти вăтам шкулта физкультура учителĕнче, «Шимкусский» совхозра хăмла туса илес енĕпе тăрăшнă. Унтан – Шупашкарти «Энергия» стадион директорĕ, 4-мĕш СПТУра тренер-преподаватель, Шупашкарти 56-мĕш шкулта физкультурăпа ОБЖ учителĕ. Çавăн пекех 23-мĕш профтехучилищĕре, ЧЭТКра преподавательте ĕçленĕ*






КОРРУПЦИ

# Вĕренĕн те вĕçĕ пур

**Ĕçлĕ çынсем, чиновниксем, общество деятелĕсем укçашăн сутăнни пурнăçа аркатакан тĕслĕх пулса тăрать.**

**Пĕлмеççĕ, курмаççĕ, илтмеççĕ теççĕ пулас та хăйсем кукăр çул çине тăнине, анчах явсан-явсан вĕренĕн те вĕçĕ пулать, кукăр алăллисен те явап тытма тивет.**

Телевизорпа кинофильмсем пăхатăн та, мĕн тери пысăк должноçри çынсем те темĕн тума хатĕррине куратăн. Коррупцие хăйсем пӳлмелле чухне, право сыхлав органĕнче ĕçлекенсем те çав пăсăк çул çине тăраççĕ. Çавсем пурте пурнăçран илнĕ тĕслĕхсем, çавăнпа кăмăла хуçаççĕ. Çамрăксемшĕн пушшех япăх кунашкал ӳкерчĕксем – вĕсене ыррине вĕрентмелле, ырă тĕслĕхсем çинче общество пурнăçне çĕнетсе пыма, тĕрĕсмарлăха сивлеме вĕрентмелле.

**Иван ИВАНОВ**

СЫВĂ ПУРНĂÇ ЙĔРКИШĔН




**Наркотиксемпе тĕрлĕ психотроплă япаласем пирĕн обществăшăн пысăк хăрушлăх кăларса тăратаççĕ.**

**Уйрăмах çул çитмен ачасем хăрушлăх ушкăнне ăс-тăнĕ çирĕпленсе çитменнипе, аслăраххисен витĕмĕпе хăвăрт çакланаççĕ. Тата ачасен пурнăçĕ ытларах çемьери лару-тăруран, тусюлташсен ушкăнĕнчен килет.**

Ача психотроплă хатĕрсем тутанма пуçланине çак паллăсем кăтартаççĕ:

– шкулта япăх вĕренме пуçлать;

– малтан килĕшнĕ япаласем патне интересне çухатать;

– кăмăл-туйăмĕ, ыйхă вăхăчĕ час-часах улшăнать, апат питĕ сахал çиет;

– куç шăрçисем пĕчĕккĕ е питĕ пысăкланса кайнă;

– çĕнĕ юлташсемпе туслашма пуçлать тата вĕсемпе ашшĕ-амăшĕнчен пытанса калаçать;

– килтен укçа çухалнине сисме пулать;

– япаласем хушшинче шприцсем, тĕрлĕ хутăшлă пакетсем, пипеткăсем тупма пулать.

Çавăнпа та вĕсене мĕн пĕчĕкрен, ача садне çӳренĕ вăхăтранах сывă пурнăç йĕркине тытма вĕрентсе, хăнăхтарса пымалла. Шкула кайсан, кружоксене, секцисене çырăнтармалла, спортпа туслаштармалла.

**Татьяна ИГНАТЬЕВА,**
**врач-нарколог**

СОВЕТЫ ВРАЧА



# Рак молочной железы

**С 1993 года Всемирная организация здравоохранения (ВОЗ) объявила октябрь месяцем борьбы с раком молочной железы, а дату 15 октября – Всемирным днем борьбы с раком молочной железы. Цель проводимых мероприятий – мотивация женщин на заботу о собственном здоровье, регулярное обследование, обращение к врачу для своевременной диагностики заболевания на начальной стадии.**

Это поможет врачам выявлять рак груди на тех стадиях, когда он может быть полностью излечен, а женщинам поможет сохранить и продлить свою жизнь.

Рак груди возникает в выстилающих клетках протоков или долек железистой ткани груди. Первоначально злокачественное новообразование ограничивается протоком или долькой, где обычно не вызывает никаких симптомов и имеет минимальный потенциал распространения. Со временем эти раковые образования (стадия 0) могут прогрессировать и проникать в окружающую ткань груди, а затем распространяться на близлежащие лимфатические узлы или на другие органы тела. Причина смерти от рака груди происходит чаще всего из-за обширных метастазов. Рак молочной железы – одно из самых распространенных онкологических заболеваний, регистрируемых среди женщин. По данным ВОЗ, ежегодно в мире выявляется около 2,3 млн. случаев заболевания раком молочной железы и более 600 тыс. смертей от этого заболевания.

Сейчас рак молочной железы занимает в России 1 место среди онкологических заболеваний у женщин, так же как и в мире. Ежегодно выявляется более 70 тыс. случаев рака груди, что составляет примерно пятую часть от всех опухолей.

Эффективность излечения рака молочной железы зависит от стадии.

На сегодня единственный надежный способ борьбы против рака молочной железы – превентивная диагностика (на доклинической стадии).

Симптомы, при которых нужно немедленно обратиться к врачу:

• боль в молочной железе, которая не имеет видимых причин и сохраняется в течение длительного времени;
• уплотнения в молочной железе;
• изменение формы и размеров груди, отечность, деформация, появление асимметрии;
• деформации соска (чаще всего он становится втянутым);
• выделения из соска;
• ямочка, впадина, которая появляется на молочной железе, если поднять руку вверх;
• увеличение лимфатических узлов в подмышечной впадине, над или под ключицей;
• припухлость в плече, в области молочной железы.

Как минимизировать риск развития рака молочной железы:

- проводить регулярное профилактическое обследование
- женщинам старше сорока лет необходимо проводить один раз в 2 года маммографию, с 20 до 40 лет ежегодно УЗИ молочных желез;
- проводить систематическое самообследование груди;
- обращаться к врачу при проявлении первых изменений в молочной железе.

**Ольга ДИМИТРИЕВА,**
**акушер-гинеколог**
**Янтиковской больницы**

*Мария ПЕТРОВСКАЯ*

# ЙĂХ ПАЛЛИ

Смена вĕçленсен Иван Петрович килне кайма пуçтарăнчĕ. Пиллĕкмĕш çул хирург пулса ĕçлет вăл хула клиникинче. Маларах хăй çуралса ӳснĕ хулари больницăра сахал мар çынна операци туса вилĕм аллинчен туртса кăларнă. Амăшĕ пурнăçран уйрăлса кайнă хыççăн хваттерне сутса халь ĕçлекен хулана куçса килес терĕ (хваттерти кашни япала амăшне аса илтернĕрен чунра йывăрччĕ).

Иван Петровича коллективра пурте хисеплеççĕ. Хăйĕн ĕçне чунтан парăннă вăл. Ăна чи кăткăс операцисем тума шанаççĕ. Турă панă хирург вăл. «Темле йывăр аманнă çынна та çĕнĕрен пурнăç парать, тĕрлĕ чиртен сыватать»,– теççĕ ун пирки клиникăра. Чирлисемпе те сăпайлă вăл. Эмелпе те, ырă сăмахпа та сиплеме пĕлет.

Иван Петрович ĕçтешĕсемпе сывпуллашрĕ те пĕрремĕш хута анчĕ. Аларан тухнă чухне «Васкавлă пулăшу» машини чуна çурса ярасла кăшкăртса килнине курчĕ. «Кама илсе килеççĕши тата?

Тем тесен те йывăр чирленĕскере е вăйлă аманнăскере пулĕ?»– шухăш вĕçрĕ пуçĕнче.

Часах машина клиника умне çитсе чарăнчĕ. Иван Петрович та ытти медицина ĕçченĕсемпе пĕрле машина патне чупса пычĕ. «Каталка» çинчи вунпилĕк-вунултă çулхи хĕрачана асăрханса антарчĕç те пĕр тăхтаса тăмасăр пулăшу пама илсе кайрĕç. Самаях аманнă курăнать. Пичĕ-куçĕ шырăнса, юнпа вараланса пĕтнĕ, вĕçĕмрен ахлатать.

Дежурнăй врач пур пулин те, Иван Петрович килне кайма пултараймарĕ, хирурги уйрăмне хăпарчĕ. Салтăнчĕ те коридора тухрĕ. Ăна хирĕç Алена Николаевна чупсах килет, аякранах калаçма пуçларĕ. «Шăпах эсир кирлĕччĕ мана, Иван Петрович. Йывăр суранланнă хĕрачана илсе килчĕç. Темиçе çĕртен аманнă, юн нумай çухатнă. Хăвăртрах операци тумалла. Пĕтĕм шанчăк сирĕн çинче. Юрий Всеволодович кăткăс операци туса курман, вĕренсе çеç пырать, иккĕмĕш çул çеç ĕçлет. Ĕç кунĕ те вĕçленнĕ, эсир паян икĕ операци тунине те пĕлетĕп. Хĕрачана шел, ытла та çамрăк-çке, пурăнса та ĕлкĕреймен, çеçке те çурайман».

«Эпĕ хирĕç мар. Киле кайма тухнăскер суранланнă хĕрачана курнă хыççăн каялла кĕтĕм. Анестезиолог вырăнтах-и? Анализсем панă-и? Эмелсем çине аллерги çук-и? Юн хатĕр-и?» – вун-вун тĕрлĕ ыйту пачĕ аслă хирург.

«Пурте хатĕр. Пирĕншĕн кашни минут хаклă. Кайрăмăр!»– васкатрĕ больницăн тĕп врачĕ Роза Викторовна.

Операци сĕтелĕ çинче выртакан хĕрача çине тинкерчĕ хирург. Чăнах та, Роза Викторовна калашле ача-пăча çеç.

«Аннепе сывпуллашасчĕ манăн»,– аран-аран куçне уçса пăшăлтатрĕ вăл. «Пурте йĕркеллĕ пулать, хĕрĕм. Аннӳпе операци хыççăн курса калаçатăр. Сурансем те хăрушах мар. Ан кулян, пурте йĕркеллĕ пулать. Туйунта та ура хуçсах ташлăпăр-ха. Хăв чĕнсен, паллах»,– шӳтлерĕ тухтăр хĕрачана лăплантарса.

Анестезиолога пуç сĕлтсе ĕçе пуçăнма хушрĕ. 6 сехете пынă операци ăнăçлă вĕçленсен пурте хаш! сывласа ячĕç. Хĕрачан пурнăçĕ хăрушлăхра мар ĕнтĕ текех, тăна кĕриччен реанимаци уйрăмне илсе кайрĕç.

Иван Петрович хваттере каçхине çеç çитрĕ. Хывăннă хывăнман диван çине выртса ним туйми çывăрса кайрĕ. Ирхине вăрансан тӳрех телефонне уçса пăхрĕ: никам та çырман та, шăнкăравламан та. «Апла пулсан хĕрачапа пурте йĕркеллĕ»,– чунтан савăнчĕ вăл. Ĕç вырăнне пĕр-ик сехет маларах çитсен тӳрех реанимаци уйрăмне кайрĕ.

– Ырă ир пултăр, Виктория. Хăвна мĕнле туятăн? – сывлăх сунчĕ хĕрача вăраннине курсан.

– Сывлăх сунатăп, Иван Петрович. Сурансем шутсăр ыратаççĕ.

– Ыратнине туятăн пулсан питĕ лайăх, часах сывалатăн. Уколсем тумарĕç-и-ха?

– Килеймерĕç-ха. Тавтапуçах сире, тухтăр.

– Хăвăртрах сывалма тăрăш, хĕрĕм. Санăн пурăнмалла та пурăнмалла. Пурнăçпа киленмелле.

– Тавтапуç тепĕр хут сире, Иван Петрович,– пуçне кăштах çĕклесе тав турĕ Вика.

Хĕрачан мăйĕ çинчи пĕчĕк çулçă евĕр тур палли Иван Петровичăн куçĕ тĕлне пулчĕ. Операци вăхăтĕнче епле асăрхаман-ха вăл çакна? Кăкăрта тем хĕссе лартрĕ, сывлăш та çитми пулчĕ. «Кăнтăрла иртсен тепре кĕрсе тухатăп. Суран ыратмасăр тӳрленмест. Часах сан пата Вера Николаевна медсестра укол тума килет»,– тесе Иван Петрович хăвăртрах коридора тухрĕ. Çывăхри кресло çине пырса ларчĕ. Сывлăш çавăрса янă хыççăн хăйĕн кабинетне васкарĕ. Ĕç пуçланасси пĕр сехете яхăн. Ытти кунсенче çак вăхăтпа усă курса ирхи апат çиетчĕ тухтăр. Паян пĕр чĕптĕм те çиес килмерĕ унăн. Пуçран пĕчĕк çулçă евĕр турпалли ниепле те кайма пĕлмерĕ. Диван çине ларчĕ те асаилӳ авăрне путрĕ. Университетра 3-мĕш курсра вĕреннĕ чухне каçхи дискотекăра Маринăпа паллашрĕ вăл. Пике педагогика институтĕнче историпе филологи факультетĕнче филолог пулма хатĕрленет-мĕн. Çак каçран пуçласа уйрăлми туссем пулса тăчĕç студентсем. Пушă вăхăт тупăнсанах пĕр-пĕрин патне туртăнатчĕç. Тăваттăмĕш курс пĕтерсен ЗАГСа заявлени кайса пачĕç. Туй пуласси пĕр эрне юлсан Марина йĕп пек çухалчĕ. Вăл вĕренекен институтра пулнă хыççăн хĕр пĕр çулталăка академи отпускĕ илнине пĕлчĕ. Маринăн ашшĕпе амăшĕ çĕрме пуянсемччĕ. «Пĕртен-пĕр хĕрне чухăн студента качча парас темерĕç пулĕ»,– текен шухăш та пырса кĕнĕччĕ каччă пуçне. «Пăхман хĕвеле пăхтараймăн, савман пикене савтараймăн»,– теççĕ халăхра. – Манăн та çавнашкал пулса тухрĕ пулмалла. Мĕн пулни-иртнине манса кайса малалла пурăнас пулать, тесе хăйне хăй лăплантарчĕ те пуçĕпех вĕренӳ ăшне путрĕ. Университета хĕрлĕ дипломпа пĕтернĕ хыççăн ĕçе кӳлĕнчĕ. Ахаль хирургран квалификациллĕ аслă категориллĕ врач таран ӳсрĕ. Çемье çинчен шухăшлама вăхăчĕ те, кăмăлĕ те пулмарĕ урăх. Пурнăç йӳççине çамрăклах тутанма тиврĕ ăна. Ашшĕ ывăлĕ 5-мĕш класра вĕреннĕ вăхăтра аварие лексе вилчĕ, мăшăрĕпе ачине тăлăха хăварчĕ. Амăшĕ, Роза Кирилловна, хула больницинче аслă медсестрара ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухрĕ. Ывăлĕшĕн хыпса çунатчĕ хĕрарăм. Хăйĕн пурнăçĕнчен те ытларах юрататчĕ пуль ăна. Иккĕшĕн хушшинче нимĕнле вăрттăнлăх та çукчĕ вĕсен. Çавăнпах-и, тен, амăшĕ пурăннă чухне пĕчченлĕхе туйсах каймастчĕ.

Алăка хуллен шаккани Иван Петровича паянхи пурнăçа таврăнма хистерĕ.

– Кĕрĕр, кĕрĕр, алăк уçă,– сас пачĕ вăл.

– Ырă кун пултăр. Тавтапуç сире, Иван Петрович, ĕнер хĕрачана операци тума килĕшнĕшĕн,– алă тытса тав турĕ Юрий Всеволодович çамрăк хирург.

– Тархасшăн. Эсĕ те ăнăçлах тăваттăнччĕ операцине. Шикленмелле мар çеç,– хавхалантарчĕ ĕçтешне Иван Петрович.

– Паян хĕрачан амăшĕ килмелле. Ĕнер шăнкăравласа тытаймарăм ăна. Ирхине тепĕр хут шăнкăравласа пĕлтертĕм ĕнерхи инкек çинчен.

– Вика мĕнле майпа аварине лекни паллă-и? – пĕлесшĕн пулчĕ Иван Петрович.

– Хăй каланă тăрăх, мотоциклпа йывăç çумне пырса çапăннă вĕсем пĕр çамрăк каччăпа. Лешне нимĕн те пулман. Эсир пысăк опытлă специалист пулнипе çеç вилĕмрен çăлăнса юлчĕ вăл,– хăй мĕн пĕлнине каласа пачĕ Юрий Всеволодович, çавăнпа пĕрлех ĕçтешĕн ĕçне те пысăк хак пачĕ.

– Реанимацирен халех куçарма юрамасть-ха Викăна. Ыратнине иртермелли эмелпе укол турĕç-ши ăна? Кĕрсе тухмарăн-и-ха ун патне?– çинеçинех ыйту пачĕ Иван Петрович.

Вĕçĕ 6-мĕш стр.

ПИРĚН ЕНТЕШСЕМ

# Чапллă артист, писатель, драматург

**Сахал мар таланта пурнăç çулĕ çине кăларнă, паллă çын тунă район центрĕнчен инçе те мар вырнаçнă Кивĕ Пуянкасси ялĕ. Çавăн пек çынсенчен пĕри, паллах, çуралнăранпа 95 çул тултарнă Чăваш халăх артисчĕ Геннадий Терентьевич Терентьев. Вăлах – 1972 çултанпа СССР Писателĕсен Союзĕн членĕ, РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ, К.С.Станиславский ячĕллĕ РСФСР Патшалăх премийĕн лауреачĕ. Геннадий Терентьев 1929 çулхи октябрĕн 17-мĕшĕнче кун çути курнă, 77 çул пурăннă.**

Геннадий Терентьев çамрăклах ĕçе кӳлĕннĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çулĕсенче вăл колхоз почтальонĕ, трактор прицепщикĕ пулса ĕçленĕ. Каччă колхозра ĕçленĕ вăхăтрах ялти пултарулăх коллективне те хастар хутшăннă. Çамрăклах театр искусствине юратнă май, çара кайиччен 1947 çултан пуçласа районти культура çурчĕн художество ертӳçинче тăрăшнă. Çар службинче вăл 1949–1951 çулсенче пулнă. Кĕçех чун туртăмĕ ăна К.В.Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх академи драма театрĕ çумĕнчи студие илсе çитерет, унта вĕренет. Çав вăхăтран пуçласа театрта ĕçлет. Нумай роль калăплать, нумай сăнара хăйĕн чĕри витĕр кăларать. Халăх кăмăллать ăна. Акă мĕнле хакланă ăна хăйĕн «Тăвай енĕн сумлă çыннисем» кĕнекинче Николай Михайлович Яклашкин: «Куракансен асĕнче – вăл выляна Никандр (А.Кăлкан, «Авлантарчĕç»), Тимуш («Пĕр хĕре юратакансем»), Хĕветĕр (Н.Айзман. «Кай, кай Ивана»), Володя (Н.Терентьев. «Арканнă юрату»), Сетнер (К.Иванов. «Нарспи»), Сартиван (Е.Никитин. «Сар пике»), Тарас (Л.Агаков, В.Яковлев. «Пĕрре çуркунне»), И.Я.Яковлев (И.Максимов-Кошкинский». «Константин Иванов»), Н.Терентьев. «Çиçĕм хыççăн аслати»), Элентей (Илпек Микулайĕ. «Хура çăкăр»), И.Н.Ульянов (Н.Терентьев. «Хумсем çырана çапаççĕ»), Куçма (В.Распутин. «Чуна кивçен илеймĕн») тата ытти сăнарсем.



Пысăк ăсталăхшăн Геннадий Терентьева Чăваш АССР Аслă Канашĕн Президиумĕн Хисеп грамотипе (1960 ç.), СССР Культура министерствин «За отличную работу» знакĕпе (1968 ç.) наградăланă. «Хумсем çырана çапаççĕ» пьесăра И.Н.Ульянов рольне лайăх вылянăшăн К.С.Станиславский ячĕллĕ РСФСР Патшалăх премине панă».

Куракансем унăн пьесисемпе драмисене те хапăл йышăннă. Геннадий Терентьев Болгари писателĕн И.Петрованăн «Нонка юратăвĕ» тăрăх 1963 çулта çырнă пьесăна тепĕр çулхинех К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш Патшалăх академи драма театрĕнче лартнă. Унăн театр репертуарне çирĕп кĕрсе вырнаçнă «Хурăнлăхра çуркунне» ятлă иккĕмĕш пьеси вара республикăри конкурсра виççĕмĕш премие тивĕçнĕ. Вырăсла куçарнă ку пьеса «Чувашские пьесы» сборникре 1973 çулта пичетленнĕ.

Драматург çавăн пекех «Энĕш хĕрринче» комеди (1968 ç.), нумай пайлă «Ывăлсем» драма (1972), «Элпуç Нарспийĕ» комеди (1973), «Анаткасра (1977), «Çĕмĕрт шап-шурă чечекре» (1980) тата ытти те çырнă. Вĕсене театр сцени çинче лартнă кăна мар, халăх патне уйрăмшар кĕнекен те çитнĕ.

– Талант тени вилĕмсĕр. Пирĕн ентешĕмĕр Геннадий Терентьевич Терентьев çавăн пек паллă артист, писатель тата драматург пулнă, çакăнпа пĕрлех çынлăхĕ те пысăкчĕ унăн,– терĕ Раççей Журналисчĕсен союзĕн членĕ, Кивĕ Пуянкассинче çуралса ӳснĕ, районти «Ял ĕçчене» хаçата нумай çул чунне панă, Геннадий Терентьевичпа иккĕшĕ пĕр-пĕрне лайăх пĕлнĕ Иван Иванович Соловьев çыравçă.

**Иван ГЛАДКОВ**

# Терроргăха çул çук



**Тӳрĕ кăмăллă çынсем, обществăшăн, пурнăçшăн тăрăшакансем, кĕскен каласан, пĕтĕм прогрессивлă этемлĕх террора сивлет, тĕп тума тăрăшать.**

Анчах терорла ушкăнсем çав-çавах пуç çĕклеççĕ, халăха, çынсене хăратма хăтланаççĕ, терорла актсем тăваççĕ. Дагестанра та пулчĕç çавăн пек ирсĕр ĕçсем. Анчах террористсен çулне пĕрех пӳлеççĕ, явап тыттараççĕ. Курск, Белгород çине тапăнни те хăратма тунă терорла актсем пулса тăраççĕ. Анчах çакна Раççей çыннисем кăна мар, тĕнчери пĕтĕм прогрессивлă общественноç сивлет. Çак шутра – Хусанта БРИКС тĕлпулăвне хутшăннă çĕршывсен делегацийĕсем те.

Эпир – тĕрĕслĕхшĕн. Çакă пире пур йывăрлăха та çĕнтерме вăй парать.

**Иван ИВАНОВ**

*Мария ПЕТРОВСКАЯ*

# ЙĂХ ПАЛЛИ

**Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 5-мĕш стр.**

– Уколне çур сехет каяллах тунă. Сывăратчĕ эпĕ пынă чухне. Киле кайиччен сирĕн пата кĕрсе тухас терĕм. Каям-ха эпĕ,–сывпуллашрĕ Юрий Всеволодович.

Çамрăк хирург тухса кайсан та час лăпланмарĕ Иван Петрович. Малта вунултă çула тăсăлнă тĕлпулу кĕтет иккен ăна. Кун çинчен хĕрачан майĕ çинчи пĕчĕк çулçă евĕр турпалли – йăх палли систерчĕ. Вăл амăшĕпе ашшĕн те пурччĕ, хăйĕн те çав вырăнтах. Ĕç кунĕ пуçланасси шăп та лăп çур сехет. Хирург реанимаци уйрăмне тепĕр хут кайса килес терĕ. Вика пĕр тикĕссĕн сывласа çывăрнине курсан вăратас темерĕ, алăка майĕпен хупса палатăран тухрĕ.

Шутлама та пултарайман-çке вăл хăйĕн хĕр пĕрчи пуррине. Пĕлнĕ пулсан кирек ăçтан та шыраса тупнă пулĕччĕ чун тĕпренчĕкне! «Эх, Марина, Марина, мĕншĕн пĕр-пĕччен вăрттăн ларса кайрăн-ши пурнăç урапи çине? Ăçта чарăнассине те пĕлтереймерĕн»,– ассăн сывларĕ хусах каччă. Пуçри шухăшĕсене телефон шăнкăравĕ татрĕ: «Иван Петрович, операци пӳлĕмĕнче кĕтетпĕр сире. Аманнă икĕ каччăна илсе килчĕç»,– илтĕнчĕ Арина Николаевнан хумханулă сасси.

«Халех çитетĕп»,– шантарчĕ те тухтăр уттине хăвăртлатрĕ.

Икĕ çамрăкран пĕрне палатăна илсе кайрĕç (суранĕсем йывăр пулманран), теприне – операци сĕтелĕ çине.

Операци яланхи пекех ăнăçлă иртрĕ. Хăйсен çăмăлттайлăхĕпе инкеке лекнĕ çамрăксем кĕçех утма-чупма пуçлĕç.

Викăна кăнтăрла иртсен пыма шантарчĕ пулин те палăртнă вăхăтра пулаймарĕ ун палатинче хирург. Пĕр кунта виçĕ операци тумалла пулчĕ. Смена вĕçлениччен кĕрсе тухма вăхăт тупрĕ-тупрех.

Хĕрача пĕчченехчĕ. Пичĕ çинчи шăйрăксем малтанхи пекех палăрмаççĕ, шыççи те чакма пуçланă, майĕпен сăн кĕрсе пырать. Сенкер куçĕсем самаях чакăрланнă. Нихăçан асран кайми куçсем...

– Мĕнле пурăнать кунта пирĕн хĕр пĕрчи? Ирхинехинчен кăшт самайрах туятăн-и? Температура хăпармарĕ-и? – хĕрачан сывлăхне пĕлес килчĕ тухтăрăн.

– Пуç ыратать, хушăран хушă çаврăнать. Уколĕсене вăхăтра тăваççĕ. Температура – 37,5, – хуравларĕ Вика.

– Санăн пуç мими вăйлах чĕтреннĕ, çавăнпа пуçу ыратать те, çаврăнать те. Сипленнĕ хыççăн иртсе каять. Малалла мотоциклпа ярăнасси çинчен ан та ĕмĕтлен,– асăрхаттарчĕ Иван Петрович.

– Паян анне килсе кайрĕ. Вăл та мана мотоциклпа ларса тухса кайнăшăн вăйлах ятларĕ. Сире тав тума хушрĕ.

– Аннӳпе курса калаçмаллаччĕ манăн. Эсир ку хуларах пурăнатăр-и?

– Эпир кунтан 100 çухрăмра пурăнатпăр. Сирĕн хулана кукамайпа кукаçи патне хăнана килтĕмĕр,– пĕлтерчĕ хĕрача.

– Ăнлантăм, тавах. Вика, санăн нумай сăмахламалла мар. Паянлăха çитĕ. Тăма та юрамасть, выртас пулать. Лайăх çĕр каçмалла пултăр. Чипер юл. Ыранччен, Виктори,– сывпуллашрĕ хĕрачапа врач.

Хваттере çитсен кăштах каннă хыççăн телефон шăнкăртатрĕ: «Иван Петрович, сирĕнпе Лаврентьева Викăн амăшĕ калаçать. Тавтапуç сире манăн хĕрачана вилĕмрен çăлса хăварнăшăн. Хăвăрăнпа куçакуçăн калаçасшăнччĕ, унăн сывлăхĕ çинчен тĕплĕнрех ыйтса пĕлесшĕнччĕ. Шел пулин те, эсир пушă марри çинчен пĕлтерчĕç. Ыран ирхи сменăра ĕçлетĕр-и эсир?» – илтĕнчĕ Маринăн йĕс шăнкărав пек уçă сасси. Çак çула çитсе те пĕрре те улшăнман иккен вăл. «Ĕçре вăхăт сахалрах манăн. «Туслăх» кафере паян каçхине 8 сехетре тĕл пулма килĕшетĕр-и?» – ыйтрĕ Иван Петрович сассине хуланлатса. «Эпĕ хирĕç мар»,– пĕлтерчĕ Марина.

Иван Петрович кафене кĕрсен Маринăна шырарĕ. Шăп сакăр сехет çитсен алăкран йăрăс пӳллĕ, сап-сарă çӳçлĕ, çуткам та хитре сăнлă хĕрарăм кĕрсе тăчĕ. Арçын ăна çийĕнчех палласа илчĕ, вунултă çул иртмен те тейĕн. Тăчĕ те ун еннелле утрĕ. «Ырă каç пултăр, Марина. Иван Петрович Леонтьев, Викăна операци тунă хирург. Манран хĕрлĕ-хĕрлĕ розăсем»,– терĕ хĕрарăма чечек çыххи тыттарса. Маринăн куçĕсем черкке пысăкăш пулса кайрĕç, кĕтмен тĕлпулу калаçаймиех туса хучĕ ăна. «Кунта тăма аван мар, маларах иртĕр»,– хĕрарăма хулĕнчен тытса тулли сĕтел умне илсе пычĕ арçын, ларма пулăшрĕ.

«Ваня, Викăна операци тăваканĕ эсĕ пулнине пĕлмен эпĕ. Эсĕ урăх хулара пурăннăран сан çинчен шутлама та пултарайман. Тепĕр хут тав тăватăп сана хĕрачана вилĕмрен çăлса хăварнăшăн. Эсĕ пулман пулсан мĕн пулнă пулĕччĕ – калама та хăрушă»,– хăйне хăй алла илсе тав турĕ Марина.

«Вика манăн хĕрача пулнине пĕлнĕ пулсан операци тăваймастăмччĕ те пулĕ. Юрать-ха мăйĕ çинчи пĕчĕк çулçă евĕр турпаллине тепĕр ирхине çес асăрхарăм. Туй умĕн ăçта кайса çухалтăн эсĕ? Вика çинчен мĕншĕн нимĕн те пĕлтермерĕн мана, Марина? Ăçта кăна шыраса пăхмарăм-ши – усси пулмарĕ. Мĕн илсе çитерчĕ сана çак утăм патне?» – хăйне канăçсăрлантаракан ыйтусен хуравĕсене пĕлесшĕн пулчĕ Иван Петрович.

«Нивушлĕ сана аннÿ нимĕн те каласа паман?» –тĕлĕнчĕ хĕрарăм. «Мĕн çинчен каласа памалла пулнă унăн? Анне пурнăçран уйрăлса кайни кĕçех виçĕ çул çитет»,– ассăн сывларĕ арçын.

– Пĕлмен, каçар. Иртнисене аса илес килмесен те чăннине пĕлтерсех пулать сана, Ваня. Туй кĕпи илме каймалли кун Роза Кирилловна мана хула паркĕнче тĕл пулма ыйтрĕ телефонпа. Эпĕ килĕшрĕм.

– Марина, ман санпа питĕ кирлĕ калаçу пулать,– терĕ вăл мана çитнĕ-çитмен.

– Эпĕ итлетĕп,– терĕм ун çумне ларса.

– Ваня – манăн пĕртен пĕр ывăл. Эпĕ ăна ашшĕсĕр, питĕ йывăрпа ӳстертĕм. Унăн халех авланма юрамасть. Çемье вĕренме те, наука ĕçĕсене çырма та, карьера тума та чăрмантарать. Ывăлăма никампа та пайлас килмест. Вăл – манăн шанчăк, тĕрев. Эсир пĕрлешсен, ман çинчен манса каятăр. Ватлăхра пĕччен юлас килмест манăн. Ваньăна качча тухма ирĕк памастăп сана. Итлемесен кайран ӳкĕнмелле ан пултăр,– терĕ ун куçне мана санăн аннÿ. – Киле çитсен выртсах макăртăм. Хам ача кĕтнине туй кунĕнче çеç каласшăнччĕ, сана кĕтмен савăнăçлă парне пултăр тенĕччĕ. Аннÿ сăмахне итлесе Викăна çурма тăлăх ӳстертĕм, сан пурнăçунтан уйрăлтăм. Атте-аннепе калаçнă хыççăн хватере сутса эсĕ халь ĕçлекен хулана куçса килтĕмĕр. Вика виçĕ çул тултарсан урăх хулана ĕçлеме вырнаçрăм,– вĕçлерĕ хăйĕн калаçăвне Марина.

– Ывăлăм, çынна нихăçан та усал ан ту. Усалли виçĕ хут пысăкланса каялла мăй таврăнать,– тенĕччĕ анне мана хăй рак чирĕпе чирлесен. Çак хăрушă чире çĕнтереймерĕ вăл, 63 çултах çĕре кĕчĕ. Ку сăмахсене ахальтен каламан иккен. Тупсăмĕ паян тупăнчĕ ав. Эпĕ еплерех асапланнине курсан та тĕрĕссине каламан мана, каçару та ыйтман. Ахальтен курăнмасть пулĕ тĕлĕкре те. Чунĕ ниепле те лăпланмасть унăн. Пĕлетĕп, кун пеккине каçарма питĕ йывăр пулсан та каçарар аннене, Марина, чунĕ канăçтăр.

– Вилнĕ çын çинчен япăх калаçма хушмаççĕ, каçаратăп,–килĕшрĕ хĕрарăм.

– Марина, Викăсăр пуçне кам та пулин пур-и санăн? – тинех хăйне канăç паман ыйтăва пачĕ Иван Петрович.

– Туй кĕпи тăхăнса курман эпĕ, Ваня. Хĕрĕмпе çеç пурăнатăп. Çемье çинчен пĕрре те аса илмен, сана юратнă пек урăх никама та юратаймарăм,– тĕрĕссине каларĕ Марина.

– Туй кĕпи тăхăнма кая юлман-ха эпир, 40 çула та çитеймен. Манăн мăшăр пулма килĕшетĕн-и, чунăм? – хумханса ыйтрĕ Иван Петрович.

– Паллах, килĕшетĕп, савниçĕм,– пулчĕ хурав.

Темиçе çул хушшинче те сӳнмен юрату вăй илсе çĕнĕрен хĕмленсе çунма пуçларĕ. Унăн хĕрÿлĕхĕ вĕсен тĕпренчĕкне сывалма пулăшатех.

## Ăшшăн саламлатпăр



Нӳшкасси ялĕнче пурăнакан хамăрăн хаклă та юратнă çыннăмăра – аннене, кукамая, кине, вăшават та тараваt тăхлачăна, тăвана **Юлия Валентиновна Волкована** паллă юбилейпе, 65 çул тултарнă ятпа пĕтĕм кăмăлтан ăшшăн саламлатпăр! Сана çирĕп сывлăх, ăнăçу сунатпăр, ĕмĕтленнисем çитсе пыччăр, пуçланă ĕçсем пурнăçланччăр. Савăнса пурăн, кулленхи кашни самантшăн хĕпĕрте! Çумра ялапах сывăх çынсемпе шанчăклă тус-юлташсем пулччăр. Ачусемпе, мăнукусемпе савăнса, ырă курса пурăнмалла пултăр. Вĕсем куç тулли телей парнелеччĕр, сăн-питӳ ялан савăнăçпа ялкăштăр. Çĕр çинчи мĕнпур таси, ырри, телей кӳрекенни санпа пĕр çулпа утчăр.

Пирĕнпе юнашар çакăн пек маттур та юратакан çын пулнишĕн эпир савăнатпăр. Пире чун парса тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстернĕшĕн, ăс панăшăн çĕре çити пуç таятпăр.

Сан сывлăху тĕреклĕ пултăр,
Çăлкуç пек тăтăр вăл тапса.
Телей хĕвелĕ саншăн çунтăр,
Çапла калатпăр ыр сунса.

**Ăшă салампа – хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕ, ултă мăнукĕ, хунямăшĕ, тăхлачисем, тăванĕсем** 1188

Хисеплĕ ĕç ветеранне, Нӳшкассинче пурăнакан, кунта сутуçăра ĕçленĕ **Юлия Валентиновна Волкована** октябрĕн 26-мĕшĕнчи 65 çулхи юбилейĕпе ăшшăн саламлатпăр. Мĕнпур ыррине сунатпăр. Пурнăç илемĕпе киленсе пурăнма çирĕп сывлăх, çăлкуç таппиллĕ вăй-хал, пысăк хавхалану сунатпăр. Çывăх çыннусен ăшшине, тимлĕхне, хисепне туйса нумай-нумай çул пурăнмалла пултăр, кĕрекӳ çăкăр-тăвартан, хăвна сума сăвакан тус-тăванăрсенчен ан татăлтăр. Чунпа çамрăк пулăр, чир-чĕр мĕнне нихăçан та ан пĕлĕр.

**«Тăвайри кооператив» потребобщество**

# Усă чун-чĕреллĕ, ĕçчен те кал-кал

**«Паян сана валли чи çепĕç сăмахсем,**
**Чи çепĕç юрă-кĕвĕ янăрать.**
**Паян çуралнă кун, иртеççĕ-çке çулсем,**
**Паян сана кашни телей сунать».**

**Çак сăвă йĕркисене Елена Фомина сăвăç пĕр ялтах – Нӳшкассинче пурăнакан Юлия Валентиновна Волкована маларахри çуралнă кунпа саламласа çырнă пулнă.**

Паллах, ырлăх, телей сунса шăрçаланнă çав йĕркесем. Ун чухне 45-ре пулнă Юлия Валентиновна. Халĕ вара октябрĕн 26-мĕшĕнче, урăхла каласан, ыран, 65 çул тултарать. Усă чун-чĕреллĕ, ĕçчен те калкал хĕрарăм вăл. Пĕр çул çеç мар пĕр-пĕрне пĕлетпĕр эпир. Хăй каланă тăрăх, пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ 38 çулпа танлашать унăн. Канаш хулинче заводра та, тăван хуçалăхĕнче бригадирта та, райпо тытăмĕнче те ĕçленĕ вăл. Нихăш ĕçĕнче те ӳркенсе тăман, чуна панă. Çăмăл ĕç те шыраман. Ĕç уншăн, хăй каланă тăрăх, пурнăç тыткăчи. Пурнăçра хăйне тупнипе, çемье ырлăхĕшĕн, çынсемшĕн тăрăшнипе паян кун та кăмăллă хĕрарăм. «Çапла пурăннине мĕн çиттĕр,– тет ĕç ветеранĕ,– пурăнан пурнăç çутă та такăр пултăр». Халĕ çакнах ачисене, мăнукĕсене сунать. Чире пула пурнăçран ытла та вăхăтсăр уйрăлса кайнă мăшăрĕпе висĕ ача çуратнă вĕсем, иккĕшĕ ялта пурăнаççĕ халь, пĕри – Вăрмар поселокĕнче тĕпленнĕ. Ултă мăнук халĕ унăн. Вĕсем ӳсеççĕ, вĕренеççĕ, аслисене хисепе хураççĕ. Çакă савăнтарать Юлия Валентиновнăна. Вĕсем малашне те тĕрĕс-тĕкел çитĕнессе, ашшĕ-амăшне, патшалăха юрăхлă çынсем пуласса питĕ шанать, вĕсене ыррине сунать, май килнĕ таран пулăшма тăрăшать.

Юлия Валентиновна хăтлă та типтерлĕ кил-çуртра ывăлĕпе тата упăшкин амăшĕпе, 93-ри Анфиса Иссаковнапа пĕрле пурăнать. Кил-хуçалăхра хур, чăхчĕп, выльăх-чĕрлĕх усраççĕ, кил пахчинче çимĕçсем туса илеççĕ. Сĕтел çинче – кукăль, икерчĕ, аш-пăш, тĕрлĕ тутлă пулă. Ӳркенсе тăмасть – кукăлĕсене тăтăшах пĕçерет, çынсене те сăйлать.

Сăмахăма Елена Андреевна Фоминан сăвă йĕркисемпех вĕçлесшĕн эпĕ, унран лайăх, ытарлă калама пĕлейрес те çук:

«Телей – чи пысăкки!
Сывлăх – чи çирĕппи!
Чи çепĕç юрату патăр Турри.
Инкек-синкек таçтан иртсе кайтăр санран,
Хисеп те чыс – ялан сана валли!»

**Иван ГЛАДКОВ**

ТИМЛĔХ ЫЙТАТЬ

# Пĕчĕк клуб пулсан аванччĕ

**Лачкасси ялĕнче клуб çук пирки усă курма урамра сцена ăсталанă. Пысăк коллективпа юрлама та, ташлама та пулать унта. Тăрмăш территори уйрăмĕн пуçлăхĕ Алексей Матросов ăшă сăмахсемпе саламласа, хĕрлĕ хăю кассах уçнăччĕ ăна. Хăй те ял çыннисене юрă парнеленĕ.**



Концерт программине «Тăрмăш» халăх фольклор ушкăнĕн хастар артисчĕсем тăсна, ушкăнпа та, уйрăмшарăн та юрă хыççăн юрă шăрантарнă. Ял халăхĕ те айккинче юлман. «Тавтапуçах сире пире хăварăн хитре те усă сассăрсемпе юратакан юрăсемпе хавхалантарнăшăн, уяв туса панăшăн. Çанталăк сивĕтрĕ. Кунта пуçтарăнса савăнаймăн. Ялта пĕчĕкрех клуб тусан та аван пулĕччĕ»,– тенĕ Лачкасси ялĕн хастарĕсем. Паллах, кун пирки те шутламалла.

**Елена МАТРОСОВА,**
**«Тăрмăш» халăх ушкăнĕн ертӳçи**

**Памятные даты истории РОССИИ**

| | |
|---|---|
| 26 октября | Принятие Декрета о мире (107 лет) |
| 28 октября | День армейской авиации РФ |
| 30 октября | День основания Российского Военно-морского флота (ВМФ) (328 лет) |

Утерянный аттестат о среднем образовании серии 0212 400 № 1170566, выданный МБОУ «Яншихово-Норвашская средняя общеобразовательная школа» 29 июня 2015 года на имя Федорова Геннадия Петровича, считать недействительным. 1192

1193 ПРОДАЮ дом, Латышево. Т. 8-9523115846

1073 ТЕПЛИЦЫ. Т. 8-9871294822 12-7

0694 КУП. коз, овец, бычков. Т. 8-9278508564 25-15

0217 ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА. Т. 8-9876617161 35-24

0305 ПЕСОК.ЩЕБЕНЬ.ОПГС. Т. 8-9061333944 22-22

1030 НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ. Т. 8-9279985488. Володя. 11-9

1000 Требуются разнорабочие в Москву. З/п от 100 тыс. р. Т. 8-9373882555 22-11

1144 ПЛАСТ. ОКНА и двери. Т. 8-9603018627 3-3

1185 ĔНЕ СУТАТĂП. Т. 8-9278604044

1191 ПРОДАЮ поросят. Дост. Т. 8-9278560135 6-1

1133 Продам дрова. Валежник. Т. 8-9534482716 , Иван. 5-4

1169 Ремонт холодильников и стиральных машин. Т. 8-9279955504 3-2

1118 БУРЕНИЕ КОЛОДЦЕВ, ж/б колец. Доставка. Т. 8-9603061972 4-3

1095 Закупаем молочных ягнят, козлят от 2 мес. также молочных телят от 1 мес. Т. 8-9953423107 5-4

1050 Скотобойня. Закупаем бычков, коров, телок. По приятным ценам. Т. 8-9379523380 8-8

1051 КУПЛЮ дорого. Коров, бычков, телок. Вынужденный забой. Т. 8-9379579151 8-8

0990 КУПЛЮ бычков, коров, телок, вынужд. забой. Дорого. Т. 8-9370160057 20-11

1017 ОКНА ПВХ под ключ от производителя за кор. сроки. Замер. Гарантия. Скидки. Монтаж по ГОСТу Т. 8-9603031551 11-11

ПОДОЛОГ
Сертифицированный специалист с медицинским образованием!
Коррекция вросшего ногтя. Обработка мозолей, трещин, натоптышей. Обработка ногтей, пораженных грибком.
Работа с диабетической стопой. Парамедицинский педикюр.
г. Канаш, ул. Железнодорожная, дом. 87, кабинет 217/2.
Прием ежедневно с 9.00-19.00. Возможен выезд на дом.
Обращайтесь по телефону:
8(917)-664-13-01 1906

• ВОДОПРОВОД
• КАНАЛИЗАЦИЯ
• ОТОПЛЕНИЕ
• АЛМАЗНОЕ БУРЕНИЕ
• ГНБ — ПРОКОЛ
4-3 РЕКЛАМА 8-90-53-111-566

1187 Закупаем молочных ягнят, козлят от 2-3 месяцев, а так же молочных телят от 1-2 месяцев
Т. 8-9093033504
8-9953423107 5-1

Тăвай муниципалитет округĕн администрацийĕ Кармалта çуралса ӳснĕ

**Николай Аркадьевич ЗАХАРОВ**

ятарлă çар операцийĕнче паттăрла пуç хунă пирки унăн сывăх тăванĕсемпе, ял-йышпа пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Тĕмер территори уйрăмĕн администрацийĕ Кармалта çуралса ӳснĕ, кунтах пурăннă

**Николай Аркадьевич ЗАХАРОВ**

ятарлă çар операцийĕнче паттăрла пуç хунă пирки унăн аппăшĕпе, пиччĕшĕсемпе, ытти тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

«Тăвайри кооператив» потребобщество кунта ĕçлекен Петр Иванович Беляевăн шăллĕ

**Николай Иванович БЕЛЯЕВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

"Ял ĕçченĕ" (“Сельский труженик”)
Тĕп редактор А.Е.ЕГОРОВА

Учредительсем – Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Ен цифра аталанăвĕпе информаци политикин министерствин «Тăвай районĕн «Ял ĕçченĕ» хаçат редакцийĕ» ХТУ

Хаçата çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмне тĕрĕслесе тăракан федераллă службăн Чăваш Республикинчи – Чăваш Енри Управленийĕ 2012 çулхи октябрĕн 8-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00239 №-пе регистрациленĕ.

Хаçат эрнере 1 хут (эрнекун) чăвашла (хăш-пĕр материалсем вырăсла) тухать.
Пичете панă 24.10.2024 ç. 19.00, графикпе 19.00 сех.

Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ тата каялла тавăрса памаççĕ. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн редакци явап тытмасть. Реклама материалĕсен палли – Р

Номершĕн яваплă дежурнăй И.И.ГЛАДКОВ

Компьютерпа калăплакан: Н.В.АЛЕКСАНДРОВА

Хаçата районти “Ял ĕçченĕ” хаçат редакцийĕнче наборласа версткăланă, “Чăваш Ен” ИПК” АУ типографийĕнче пичетленĕ. Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт. Çырăнтару индексĕ – ПР 238. Калăпăшĕ – 1 пичет листи. Тираж – 1435. Заказ

Редакципе издатель адресĕ: 429290, Чăваш Республики, Тăвай ялĕ, Ленин проспекчĕ, 11-мĕш çурт.

Телефонсем: тĕп редактор – 2-11-10, обществăпа политика, экономика пурнăçĕн тата çырусен пайĕсем – 2-14-05, яваплă секретарь тата наборпа верстка пайĕ – 2-13-10, бухгалтери – 2-15-64. Электронлă почта: smi11@cap.ru